26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАРТ 26 ЭРНЕКУН 66(6303) №.

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тракторсене юсамалли кĕркуннехипе хĕллехи плана срокчен тултарнăшăн, Чăваш АССР Наркомземĕпе Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

11. **Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ** (директорĕ **Г. И. Иванов**, политотдел начальникĕ **Л. З. Захаров**, старши механикĕ **Н. С. Батыжин**).

12. **Ишлей МТС-ĕ** (директорĕ **П. В. Васильев**, политотдел начальникĕ **Г. И. Тепеев**, старши механикĕ **Л. К. Кириллов**).

13. **Шупашкар МТС-ĕ** (директорĕ **С. Ф. Федоров**, политотдел начальникĕ **И. И. Смирнов**, старши механик-контролерĕ **Т. С. Кузьмин**).

14. **Йĕпреç МТС-ĕ** (директор заместителĕ **Кузьмин**, политотдел начальникĕ **К. А. Романов**, старши механикĕ **П. М. Михайлов**).

Комсомол — парторганизацисен чи çывăх помощникĕ

Чăваш комсомолĕ пăхса çитĕнтернĕ çĕршер те пиншер çамрăксем фронтра Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн çапăçаççĕ. Тылри çамрăксем промышленноçри предприятисенче, колхозсенче, совхозсемпе МТС-сенче, учрежденисемпе шкулсенче çине тăрса ĕçлеççĕ, фронта стахановла ĕçленипе, перекетлесе усранă укçа-тенкĕпе, тырпулпа пулăшса тăраççĕ.

Комсомолецсем пуçарнипе вăрçă кунĕсенче республикăра вуншар воскресник ирттернĕ, ĕçшĕн тенен укçана оборона фондне панă. Комсомолецсемпе çамрăксен пухнă укçапа пĕр бронепоезд тата танк тунуса фронта ăсатнă, боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума 11 миллион тенкĕ пухнă.

Вăрçă кунĕсенче комсомолăн предприятисенчи колхозсенчи организацийĕсем хуçалăхпа-политикăллă ĕçсене активлăрах хутшăнакан пулчĕç, вĕсен производствăри активлăхĕ ÿсрĕ. Предприятисенче халĕ комсомолецсемпе çамрăксен организацийĕсен 50 фронтовой бригада ĕçлет. Комсомолецсемпе çамрăксем иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене начар хутшăнчĕç. Пĕлтĕр вĕсен вăйĕпе ялхуçалăх машинисене пайĕсем 285.000 тенкĕлĕх пухнă, 7.000 ытла ялхуçалăх машинисене юсанă.

Комсомол организацийĕсем çарпа физкультура ĕçĕ те вăйлатнă. Всевобуч подразделенийĕсенче чылай çамрăксене çар специальноçĕсене вĕрентнĕ. Комсомолпа профсоюзсен кăçалхи йĕлтĕрлĕ кросне 124 пин çын хутшăннă.

Çаксем çинчен ВКП(б) Обкомĕн XIV-мĕш пленумне парти Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ каласа пачĕ.

Республикăри комсомол организацийĕсен туса ирттернĕ ĕçсене палăртса, пленум вĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине те палăртрĕ. Çак çитменлĕхсем, пуринчен малтан, парти райкомĕсемпе пуçламăш организацийĕсем комсомол организацийĕсене начар ертсе пынинчен килнĕ.

Комсомол организацийĕсем йĕркеллĕ ĕçлетĕр тесе, чи малтан, вĕсене организаци тĕлĕшĕнчен тĕреклетмелле. Республикăри парти организацийĕсен пулăшăвĕсĕр [illegible] комсомол организацийĕсем сахал мар. Çавна пула унти комсомолецсем предприятисенчи е колхозри çитменлĕхсене хирĕç тивĕçлĕн кĕрешеймеççĕ, руководительсене те асăрхамаççĕ, массăллă-политикăллă ĕç [illegible] çамрăксем хушшинче [illegible] пулăшмаççĕ. Çамрăксем хушшинче ĕçлекен [illegible] пурнăçа [illegible] çамрăксене комсомол ретне [illegible].

Комсомолăн предприятисенчи колхозсенчи организацийĕсем çамрăксене вырăнти [illegible] çамрăксем производство планĕсене пурнăçа кĕртес ĕçе начар хутшăнаççĕ. Çамрăксем хушшинче чылай çĕрте япăхтарса янă. Малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илесси сÿрĕккĕн пулса пырать. Çавна пула юлашки 18 уйăх хушшинче республикăра ВЛКСМ членĕсен йышĕ икĕ хута яхăн чакнă.

Районсенчи партипе совет организацийĕсене ертсе пыракансем предприятисемпе колхозсенче час-часах пулаççĕ, анчах комсомол организацийĕсем мĕнле ĕçленипе кирлĕ пек интересленмеççĕ. ВКП(б) Йĕпреç, Ишлей, Красноармейски тата ытти хăшпĕр райкомĕсем 6—7 уйăх хушши ĕнтĕ комсомол организацийĕсен ĕçĕ çинчен сÿтсе-явман.

Пленум партин Йĕпреç, Çĕрпÿ, Ишлей, Октябрьски тата Красноармейски райкомĕсен комсомол организацийĕсене ертсе пырас тĕлĕшри тĕрĕс мар практикине сивлерĕ.

Комсомол кадрĕсене тĕрĕс суйласа илмелле, вĕсене ĕçлеме вĕрентмелле, комсомолăн вăйсăр организацийĕсене тĕреклетмелле, малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илмелле. Колхозсенче, промысла артелĕсенче комсомол организацийĕсем çук пулсан, вĕсене [illegible] организацилемелле. [illegible] пленум партипе комсомолăн республикăри организацийĕсене [illegible].

Парти организацийĕсем çук çĕрти комсомол организацийĕсене уйрăмах тимлĕн çавăрса пăхмалла. Мĕншĕн тесен унти комсомол организацийĕсем çамрăксем хушшинче ирттерекен мĕнпур ĕçсемшĕн ответлă пулса тăраççĕ. ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче предприяти е колхоз ĕçĕ çинчен сÿтсе-явнă чухне унта предприяти е колхоз руководителĕсемпе пĕрле çак комсомол организацийĕн секретарьне те чĕнмелле, райком ларăвĕсенче комсомол работникĕсен отчечĕсене илтмелле.

Парторганизацийĕсем комсомол организацийĕсенче марксизм-ленинизма вĕренессине йĕркелесе яма, çамрăксене [illegible] пулăшмалла. Комсомол организацийĕсене пулăшма ВКП(б) райкомĕсен квалификациллĕ лекторсемпе пропагандистсене уйăрса памалла, парти работникĕсем çамрăксем хушшинче тăтăшах лекцисемпе докладсем туса памалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсем комсомол организацийĕсемпе ĕçлеме уйрăм инструкторсемпе отделĕсем [illegible] çине çеç шанса пурăнмалла мар, ВКП(б) райкомĕсен секретарьсем [illegible] хутшăнмалла. Пуçламăш парторганизацийĕсем [illegible] комсомол организацийĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла.

Комсомол организацийĕсен секретарĕсене, уйрăмах парторганизацийĕсем çук çĕрти комсомол организацийĕсен секретарĕсене, партин директивисене ăнлантарса пама канашлусене пухмалла, вĕсене район тата хула умĕнче тăракан хуçалăхпа-политикăллă задачăсене тĕпрен ăнлантарса памалла.

ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен яланхи комиссийĕсемпе ĕç планĕсене ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсенче пăхса çирĕплетмелле.

Çитес вăхăтра республикăри комсомол организацийĕсен секретарĕсемпе вĕçĕ кунлă семинарсем пулса иртмелле. ВКП(б) райкомĕсен секретарьсем вăл семинарсене ирттерме хăйсем хутшăнмалла, унта лекцисемпе докладсем туса памалла.

Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем тата пионер отрядĕсем ялăх ĕçленине палăртса, пленум ВЛКСМ Обкомне, партипе комсомолăн райкомĕсемпе горкомĕсене тата пуçламăш организацисене ку ĕçе татăклăнах вăйлатма хушрĕ.

Пленум çавăн пекех парторганизацисене комсомолăн ФЗО шкулĕсенчи, чугунçул училищисенчи тата предприятисемпе учрежденисенчи организацийĕсене ертсе пырас ĕçе тĕпрен лайăхлатма хушрĕ.

Ялти комсомолецсен умĕнче халĕ питех те ответлă задача — çуракине лайăх хатĕрленсе ăнăçлăн ирттерес задача тăрать. Предприятисемпе артельсенчи комсомолецсемпе çамрăксен Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвассишĕн кĕрешмелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче тăшманăн 7.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Мартăн 22-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чăçĕсем нимĕçсен 5 танкĕнчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, войскăсемпе грузсем тиенĕ 100 автомашинăна çити пĕтернĕ, боеприпассен 9 складне сирпĕтсе янă, тăшманăн полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине çити пусарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă. Пĕр соединенин чăçĕсем Днепр шывĕн хĕвеланăç çыранĕнчи плацдарма сарассишĕн çапăçнă. Çав участокра артиллерин тата минометсен йышлă батарейисене тата пехотăн пысăк вăйĕсене пухса, нимĕçсем пирĕн боецсем малалла пынине чарас шутпа темиçе хут та контратака тунă. Духовщинăран çурçĕртерехре пехотăпа танксем ярса, нимĕçсем тата хаяртарах контратакăсем тунă. Совет чăçĕсем гитлеровецсен пур контратакисене те ăнăçлăн сирсе пăрахнă, нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Жиздрыран çурçĕртерехре пирĕн оборонăна татса кĕме ăнăçсăр хăтланса, тăшман çынсемпе техника тĕлĕшпе пысăк çухатусем тÿснĕ. Паян гитлеровецсем совет позицийĕсене атакăлама пăрахрĕç. Çав участокра мартăн 19-мĕшĕнчен пуçласа пынă çапăçусенче нимĕçсен 140 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 52 оруди, 102 пулемет тата 37 миномет пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 7.000 салтакпа офицерĕ яхăн пĕтнĕ. Пирĕн чăçсем трофейсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур.

* * *

Белгород районĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн танкĕсемпе пехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Пĕр чăçăн соединенийĕ, нимĕçсен моторизованнăй дивизийĕн танксем пулăшнипе тунă атакисене сире-сире пырса, 400 гитлеровеца яхăн вĕлернĕ. Белгородран хĕвелтухăçнерехре гитлеровецсем Çурçĕр Донец шывĕ урлă каçнă та пысăк çухатусем тÿссе халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. Пирĕн подразделенисем хирĕç пырса çапса тăшмана халăх пурăнакан çав пунктран хăваласа кăларнă, ăна каялла шыв урлă ывăтса янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 ытла вилли, аркатнă 7 танкĕ, 12 автомашина тата пехота хĕçпăшалĕ нумай вырта юлнă.

* * *

Кубань çинче пирĕн войскăсем çине тăрса çапăçнă хыççăн Славянская ятлă район центрне йышăнса илнĕ. Пирĕн чăçсем халăх пурăнакан ытти пунктсене те йышăнса илнĕ. Славянская патĕнче пынă çапăçусенче тăшманăн çухатусем нумай пулнă. Тытса илнĕ трофейсене шута илеççĕ.

* * *

Винница облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр чугунçул станцине пырса тапăннă. Партизансем 47 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ тата пĕр паровоз, çар грузĕ тиенĕ 8 вагон пĕтерсе тăкнă. Чернигов облаçĕнчи партизансен пĕр отрячĕ нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушени пулнипе тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем нумай вилнĕ е аманнă.

* * *

Мартăн 21-мĕшĕнче Берлинра тухса каланă хăйĕн сăмахĕнче Гитлер нимĕç çарĕ тунă çухатусем çинчен асăнса илнĕ. Суя мастерĕ Гитлер çапла ĕнентерет: иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче Германин 542.000 çын кăна вилнĕ пулать. Гитлер çакăн пек ухмахла пĕрре кăна мар суять. Çакна ăнлантарнине те вырăнлă пулмалла: 1942 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче вăл нимĕç çарĕнче вилнисен хисепĕ 350.000 çын шутланать тесе каланăччĕ. Паллах ĕнтĕ, Гитлерăн çавăн чухнехи заявленийĕ вăл чăнлăхпа нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăман. Халĕ ĕнтĕ жуликла çĕнĕ трюкпа усă курса, 1942—1943 çулсенчи хĕллехи пĕтĕм кампанире те фашистла войскăсен пĕтĕмпе те 192.000 çын кăна вилнĕ тесе нимĕçсене ĕнентерме хăтланать. Ку расра ĕнтĕ Гитлер суялăхăн пур рекорчĕсене те кая хăварчĕ. Паллă, нимĕçсен фашистла çарĕ 1942 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи февралĕн 2-мĕшне çитиччен Сталинград районĕнче кăна 330.000 салтакпа офицер çухатрĕ. Вĕсенчен 91.000 çынна тыткăна илнĕ. 3 уйăх хушши тунă наступлени вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар тăшманăн 700.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă тата 300.000 ытла тыткăна илнĕ. 20 уйăх хушши пынă вăрçăра нимĕçсен фашистла войскисем совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра пурĕ, вилнисене кăна шутласан та, 4 миллион çынтан кая мар çухатнă. Гитлер тепле суйсан та, совет çĕрĕнче хăйсем валли вилĕм тупнă миллионшар нимĕçсем нимĕç çарĕнчен ĕмĕрлĕхех тухса ÿкнĕ. Совет Союзне хирĕç вăрçа янă ытти нимĕçсен те кунçулĕ çавăн пекех пулĕ.

Мартăн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 24-мĕшĕнче малалла тапăнса пыракан пирĕн войскăсем Абинская чугунçул станцийĕпе район центрне (Новороссийскран çурçĕрхĕвелтухăçнерехре) йышăнса илнĕ.

Ытти фронтсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Мартăн 23-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чăçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем тиенĕ 100 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕтсе янă, артиллерипе минометсен 10 батарейине пусарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр чăçăн соединенийĕсем шыв урлă каçнă та тăшманăн тĕреклетнĕ позицийĕсене йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 виллине çити вырта юлнă. 4 оруди, 17 пулемет, винтовкăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем Дорогобуж чугунçул станцийĕнчен 4 километр çурçĕртерехре Сафоново ятлă халăх пурăнакан пунктран нимĕçсене хĕссе кăларнă. Тăшман çынсем тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те пысăк çухатусем тунă.

* * *

Духовщинăран çурçĕртерехре пĕр соединенин чăçĕсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан 7 пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра пирĕн часть нимĕç пехотин пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă. Тытса илнĕ трофейсем хушшинче нимĕçсен 5 танкĕ тата 14 оруди пур. Йĕлтĕрçĕ-гвардеецсен подразделенийĕ сасартăк пырса çапса нимĕçсене Жугуны ялĕнчен хăваласа кăларнă. Гвардеецсем унта пурăнакан 60 çынна ытла вилĕмрен хăтарнă. Хĕрарăмсене, ваттисене тата ачасене нимĕçсем пĕр çуртăн подвалне хăваласа кĕртнĕ те ăна вут тĕртнĕ. Яла вăркăнса кĕнĕ совет боецĕсем вутта сÿнтерсе совет çыннисене вилĕмрен хăтарнă.

* * *

Белгород районĕнче нимĕç пехотин пĕр батальонĕ 12 танк пулăшнипе пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Пĕр чăçăн боецĕсем 150 гитлеровеца вĕлернĕ, 3 танка персе ÿкернĕ, вара нимĕçсем хăвăрт каялла чакнă. Тепĕр участокра совет артиллерийĕ тăшманăн 2 артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă тата пĕр çĕре пухăнса тăнă пехотăна саппаласа янă.

* * *

Чугуевран çурçĕртерехре пирĕн войскăсем Çурçĕр Донец шывĕ патне тухма хăтланнă тăшманăн пехотипе танкĕсене хирĕç кĕрешнĕ. Пĕр чăçăн боецĕсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе пăрахнă. Тăшманăн 9 танкне, 13 автомашинине тата 100 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ çак кунсенче станци çывăхĕнчи поселокра вырнаçнă нимĕç гарнизоне пырса тапăннă. Партизансем 96 гитлеровеца вĕлернĕ, чугунçул линине тата стрелкăсене сирпĕтсе янă. Çав участокра поездсем çÿреме чарăннă. Тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ 40 гитлеровеца çити вĕлернĕ, нимĕçсен апат-çимĕç складне, 800 метр тăршшĕ телефон кабельне, 4 пулемет, 14 лаша тата ытти çар хатĕрĕсем те тытса илнĕ.

* * *

Демянск районĕнче нимĕçсен 329-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 552-мĕш полкран тыткăна лекнĕ ефрейтор Вильгельм Фраке çапла каласа панă: «Иртнĕ çулхи кĕркунне пирĕн пата Залучье ялне генерал-майор Вернер пычĕ. Вăл сăмах тухса каларĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсем кăнтăрта кĕрешни çинчен, эпир кунта оборона çеç тытса тăни çинчен каларĕ. Сталинграда илсенех эпир наступлени пуçласа яратпăр. Вара Демянск плацдармĕнчи нимĕç войскисем вырăссене татăклăн пырса çапаççĕ те вăрçа пĕтереççĕ, терĕ. Генералăн çав сăмахĕсене эпир вырăссенчен тарнă чухне, февральте, сахал мар аса илтĕмĕр. Нимĕçсен Сталинград патĕнчи 6-мĕш армийĕ пĕтнĕ пек пĕтесрен пире хамăр урасем кăна хăтарчĕç. 552-мĕш полк çав çапăçусенче хăйĕн йышĕн 70 процентне çухатрĕ. Пирĕн ротăра 22 çын кăна тăрса юлчĕ. Юлашки çапăçура вырăссем çĕмĕрсе пынă чухне, лейтенантпа фельдфебель тарса пытанчĕç. Эпир 20 çын окопсенчех юлтăмăр та тыткăна парăнтăмăр»

ГИТЛЕРЛА КОМАНДОВАНИН ТАТА ТЕПĔР СУЯ ЭЛЕКĔ

Гитлерла фальшивомонетчиксем юлашки вăхăтра суя «вăрçă пĕлтерĕвĕсем» туса хатĕрлес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлеççĕ. Перопа пĕрре туртнипех вĕсем хут çинче советсен пехотнăй, моторизованнăй тата танксен соединенийĕсене вуншарăн пĕтерсе тăкаççĕ.

Сăмахран, Германи информаци бюровĕ мартăн 20-мĕшĕнче суя пĕлтерÿ кăларнă. Унта çапла каланă: февралĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа Çурçĕр Донецпа Днепр хушшинчи районра советăн 9 стрелковăй дивизине, 6 стрелковăй бригадине, 9 кавалери дивизине, 9 моторизованнăй бригадине, 25 танковăй бригадине, 2 танковăй полкне тата противотанковăй тупăсен бригадине пĕтерсе тăкнă иккен. Анчах та нимĕç суеçĕсене çакă та сахал туйăннă. Пĕлтерÿре малалла çапла каланă: кунсăр пуçне 19 стрелковăй дивизи, 18 моторизованнăй тата танковăй бригадăсем, Хĕрлĕ Çарăн ытти чăçĕсемпе соединенийĕсем те пысăк çухатусем тунă иккен. Çав пĕтĕмпех суя пĕлтерĕве пăртак та пулин чăн пек туса кăтартас шутпа нимĕç суеçĕсем хăйсем пĕтерсе тăкнă тесе калакан совет дивизийĕсемпе бригадисен шухăшласа кăларнă номерĕсене калаççĕ.

Çав тери йĕркесĕр суйнипе гитлеровецсем виçерен тухса кайнă. Германи информаци бюровĕ пĕлтернĕ чухлĕ совет соединенийĕсем Çурçĕр Донецпа Днепр хушшинчи районра нихăçан та пулман. Гитлеровецсем пĕтерсе тăкнă текен совет дивизийĕсемпе бригадисенчен хăшпĕрисем Хĕрлĕ Çарта пуçĕпех те пулман, нумайĕшĕ вĕсенчен кăнтăрти çапăçусене хутшăнман, çавăн пирки те вара вĕсене пĕтерме те май килмен, вĕсем çухатусем тÿсме те пултарайман.

Февраль уйăхĕн вĕçĕнче Çурçĕр Донецпа Днепр хушшинчи районра нимĕç командованийĕ контратака пуçласа ярса, пирĕн войскăсене хупăрласа илсе «нимĕçле Сталинград» тума хăтланнă. Çав шутпала нимĕçсем Хĕвеланăç Европăран çапăçу районне васкавлăн пехотнăй тата танковăй дивизисем пит нумай илсе килнĕ. Хăйсен аркатса тăкнă соединенийĕсене çирĕплетес шутпа Германирен 110—113 маршевăй батальон илсе килнĕ.

Нимĕçсем халĕ Сталинградшăн пире тавăрас тесе ĕмĕтленеççĕ. Анчах та вĕсен нимĕн те тухмасть, вĕсен ĕмĕчĕ пĕтĕмпех путланса ларчĕ. Пирĕн войскăсем хаяррăн çапăçса пырса, тăшмана йывăр çухатусем кÿрсе, командовани приказĕ тăрăх оборонăн çĕнĕ линийĕ çине куçрĕç. Çапла тунипе нимĕçсен шухăшĕсене пăрахăçа кăларчĕç.

Çав çапăçусем пынă вăхăтра, виллисемпе пĕр хыпарсăр çухалнисене шута илсен, пирĕн войскăсем 36.722 çын çухатнă.

Çав вăхăт хушшинчех пирĕн войскăсем нимĕçсен 52.000 салтакĕпе офицерĕнчен кая мар пĕтернĕ. Çакăн пек ĕнтĕ Çурçĕр Донецпа Днепр хушшинче пулнă çапăçусен чăнчăн итогĕсем.

Совет войскисем тунă çухатусем çинчен гитлеровецсем суйса пĕлтерсе Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕçсен фашистла войскисем поражени тÿснĕ хыççăн тăна кĕреймен Германи халăхне йăпатса улталама хăтланни паллă мар-и вара?

СОВИНФОРМБЮРО.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

ВЦСПС-ра

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăван 1943 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Пĕр Халăх Комиссариачĕн заказне пурнăçлас тĕлĕшпе пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсем йышăнса мала тухнă темиçе завод хушшинче Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен завод уйрăмах лайăх ĕçленине палăртнă.

Март уйăхĕнчи плана 110 процент тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ, мартăн 25-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). «Труженик» завод коллективĕ март уйăхĕнчи плана мартăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ. Çак обязательствăна вăл срокчен пурнăçларĕ. Паянхи кун тĕлне март уйăхĕнчи производство планне 110 процент тултарнă, куллен кирлĕ таварсем кăларас енĕпе 155 процент тултарнă.

Март уйăхĕнче ку заводра 20 çынна çĕнĕ профессисемпе ĕçлеме вĕрентнĕ.

Ăмăртура станочницăсем Палагаева, Дубинин юлташсем, бондарьсем Игнатьев, Карягин юлташсем, слесарь Сидоров лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕ. Вĕсем ĕç нормине 200 процентран кая нихăçан та тултарман.

ТЫЛРИ ГВАРДЕЕЦСЕМ

Вăрнар станцин коллективĕ вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлет. Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе лайăх туйса тăрса, унти кашни работник çĕрнекунне шута илмесĕр ĕçлет, поездсене çирĕп график тăрăх, пĕр чăрмавсăр ăсатса тăрать.

Станци вагонсем тиес плана тăтăшах пурнăçлать. Тиенĕ чухне чăрмаван пултăр тесе, станцире ĕçлекенсем хăйсемех вагонсене çуса тасатаççĕ, дезинфекцилеççĕ. Февраль уйăхĕнче вĕсем 60 вагона çуса тасатнă, хăйсен вăйĕпе питех те кирлĕ груза 3 вагон тиенĕ. Февраль уйăхĕнче, çил-тăмансен вăхăтĕнче, чугунçул линийĕ çинчи юра тасатас тĕлĕшпе 5 хутчен воскресник ирттернĕ.

Грузчиксенчен пуçласа станци дежурнăйĕсем таранах Лунинла меслетпе ĕçлеççĕ. Стрелка хуçалăхне яланах кăтартуллă тытса тăраççĕ. Чи лайăх стрелочник вăл — Попов юлташ. Унăн меслечĕпе Доманин, Осин юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем мĕнпур вак-тĕвек ремонта хăйсен вăйĕпе тăваççĕ.

Станци дежурнăйĕсем Каяшевпа Васянин юлташсем, весовщиксем Агеевпа Кухарева юлташсем, грузчиксем Клешивцевпа Боровков юлташсем хăйсен ĕçĕсене фронт ыйтнă пек туса пыраççĕ.

Уйрăмăнах станцире паровоз çине вутă тиекенсем пысăк çитĕнÿ тунă. Вĕсем ку ĕçе 10—15 минут хăвăртрах тăваççĕ.

Станцире вагонсене усăсăр тăратассипе кĕрешес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Организацисен айăпĕпе груз тиемелли вагонсем планпа пăхнинчен ытларах тăраççĕ. Ку тĕлĕшпе Заготзерно пунктне айăплама малла. Тыра тиес ĕçе кирлĕ пек организацилемен пирки вагонсене питех те вăрахăн тиеççĕ, вагонсем час-часах вуншар сехет усăсăр тăраççĕ. Ку çитменлĕхе халех пĕтермелле.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, станци коллективĕ çĕнĕ обязательствăсем илнĕ. Сменăсем тата уйрăм работниксем хушшинче ăмăрту договорĕсем тунă.

Вăрнар станцин коллективĕ Пильна станци коллективĕпе ăмăртать.

Вăрнар станцинче ĕçлекенсем вагонсем тиес плана яланах ăнăçлăн пурнăçлама, вагонсем усăсăр тăрассине пĕр сехет чакарма обязательствăсем илнĕ.

Станци коллективĕ хăй çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн, Хусан чугунçулĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн çине тăрса кĕрешет.

А. Чиркова.

Колхоз председателĕсен курсĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Районра колхоз председателĕсен курсĕ пулса иртрĕ. Курсран 35 çын вĕренсе тухрĕç. Унта колхоз председателĕсем агротехникăна 36 сехет хушши, политикăллă ыйтусене 10 сехет, ялхуçалăх механизацийĕн ыйтăвĕсене 4 сехет хушши вĕренчĕç.

Курса районĕç пайĕн заведующийĕ Н. Алексеев юлташ ертсе пычĕ.

С. Шадин.

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНСЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Вăрлăхсене хăвăртрах хатĕрлесе çитермелле

Наркомземран илнĕ сведенисем тăрăх, мартăн 20-мĕшĕ тĕлне Чăваш республикинчи колхозсем çуркунне акмалли тырăсен вăрлăхĕсене 94,4 процент триерсемпе сортланă. Вăрнар, Калинински, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Çĕрпÿ, Шупашкар, Шăхасан, Етĕрне районĕсем вăрлăх хатĕрлес тата ăна кондицие лартас ĕçе вăнăçлăн пурнăçларĕç. Ку районсенчи партипе совет организацийĕсем тата колхозсен активĕ вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлерĕç. Пур колхозсем те тенĕ пекех çуркунне акма паха вăрлăх çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хучĕç.

Çавăн пекех вăрлăхсене хатĕрлесе çитерессишĕн Комсомольски, Красноармейски, Элĕк тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем юлашки вăхăтра уйрăмах тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç. Колхозсем пĕрпĕрне паха вăрлăхсем парса пулăшаççĕ. Тасатса çитермен вăрлăха хăвăртрах тасатас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ.

Анчах та вăрлăх хатĕрлес ĕçе халĕ те кирлĕ ответлăхпа туса пыман районсемпе колхозсем те пур-ха. Йĕпреç, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар, Çĕмĕрле, Тăвай районĕсем вăрлăха сортласа тасатас тĕлĕшпе кая юлса пыраççĕ.

Ку районсем халĕ вăрлăхăн 60—80 процентне çеç триерсемпе сортланă. Советски район, тĕслĕхрен, вăрлăх фондне хывса çитерчĕ, анчах триерсемпе 90 процент ытларах çеç сортланă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планĕ çинчен» йышăннă постановленине тĕпе хурса ĕçлесе, çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатмалла. Вăрлăх хатĕрлес ĕçе çак кунсенчех вĕçлемелле.

Триер кĕтсе вăрлăхсене халĕ те сортламан

СĔНТĔР. (Телефонпа). Сĕнтĕр районĕнчи чылай колхозсем çуркунне акмалли вăрлăхсене хатĕрлес ĕçе тăсса пыраççĕ. Вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕ те çине тăрса ĕçлени курăнмасть. Мартăн 20-мĕшĕ тĕлне район пур культурăсем енĕпе те вăрлăх хывса çитермен, хывнă вăрлăхсен 87 процентне çеç сортланă. Вăрлăх пахалăхне тĕпчес ĕç те вăраха юлса пырать. Районри лаборатори акма уйăрса хунă вăрлăхăн 76 процентне çеç тĕпченĕ.

Уйрăм колхозсенче кăçал та, иртнĕ çулхи пекех, вăрлăх хатĕрлес ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Акă, тĕслĕхрен, Шашкар ялсоветĕнчи «Аврора» колхоз, Калайкассинчи «Гигант», «Челюскин» колхозсем, Пашалукассинчи «Красный Октябрь», «Первое Мая» колхозсем, Муркаш ялсоветĕнчи «Авангард» колхоз та иртнĕ çул начар вăрлăхсем акнă пирки япăх тырпул туса илчĕç.

Ку колхозсен руководителĕсем иртнĕ çулта пулнă йăнăшран кирлĕ выводсем тумалла пек ĕнтĕ. Анчах вĕсем паха вăрлăх акассишĕн кăçал та кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Вăрлăхсене халĕ те сортласа пĕтермен, пахалăхне тĕрĕслесе пăхман.

Атабай ялсоветĕнчи «Крестьянин», «Красное знамя» колхозсенче вăрлăхсене сортлама тытăнман-ха. Ку колхозсен председателĕсем триер килессе кĕтсе лараççĕ. Вăрлăха çавра аласемпе тасатма май пур, анчах тасатмаççĕ. Çак колхозсенче ялхуçалăх машинисем те ĕçе хатĕр мар-ха.

Часах колхозсем çуракине хатерленсе çитнин тĕрĕслевĕ пуçланмалла. Колхоз председателĕсен çуракине тухма хатĕрленсе çитни çинчен каласа памалла пулать. Çÿлте асăннă колхоз председателĕсен çакна шута илсе çуракине хатĕрленес ĕçе тĕпренех вăйлатмалла. Акмалли вăрлăхсене пурне те халех хатĕрлесе çитермелле.

А. Соловьев.

Çуракине тухма хатĕр

КАНАШ. (Хамăр корр.). М. И. Калинин юлташ «çуркуннехи уйхир ĕçĕсене пĕрремĕш черетре тăракан ĕçсем тесе шутламалла» тенине асра тытса, Уйçырмари «Комбайн» колхоз кăçалхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе уйрăмăнах лайăх ĕçлерĕ. Акмалли вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех сортласа тасатнă. Пăрçа вăрлăхне алăпа суйласа сортланă. Ытти вăрлăхсем те пурте кондицине лараççĕ. Ялхуçалăх машинисене колхоз февраль уйăхĕнчех юсаттарса лартнă. Лаша кÿлмелли хатĕрсене юсанă. Колхозниксем çурхи тырăсем акмалли участоксем çинче юр нумай тытса хăварнă. Кунсăр пуçне уя 2.570 лав тислĕк кăларнă, 2 тонна минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ, 80 центнер кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

Çуракине тухиччен лашасене мăнтăрлатас тĕлĕшпе конюхсем хушшинче ăмăрту сарăлсах пырать. Халĕ вăйсăртарах лашасене пурне те лайăх апат çине тăратнă. Çуракинче çитерме улăх ути, клевер, сĕлĕ, посыпка çителĕклĕ таран хатĕрлесе хунă.

Çуракине тухнă кун колхозра пĕрлешÿллĕ столовăй ĕçлеме тытăнать. Продуктсене хатĕрленĕ.

В. Веселов.

АГРОТЕХНИКА КĔТЕСĔ

КĔРХИ ТЫРĂСЕНЕ ÇУРКУННЕ ПĂХАССИ

Кĕрхи культурăсене çуркунне вăхăтра тата лайăх пăхассине питех те кирлĕ ĕç вырăнне хурса, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планĕ çинчен» йышăннă постановленире партипе советăн вырăнти органĕсене тата колхоз правленийĕсене кĕрхи тырăсен калчисене лайăх ÿсмелли майсем туса парассишĕн пысăк мероприятисем туса ирттерме хушнă.

Кĕрхи тырăсене юр айĕнчен лайăх кăларассишĕн кăçал уйрăмах тимлĕн ĕçлени кирлĕ. Юр тытса хăварассишĕн кирлĕ пек тăрăшса ĕçлеменнине пула чылай районсенчи колхозсен уйĕсенче юр кийĕ çÿхе пулчĕ. Калчасем çинче юр пусăрăнса тытăнса юлмарĕ, çилпе вĕçсе çырма-çатрасене тулчĕ. Çитменнине тата çанталăк ир ăшăтрĕ. Вăрмар, Куславкка, Октябрьски, Шупашкар тата Ишлей районĕсенчи чылай колхозсен уйĕсенче тырă тата акнă курăксен калчисем пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех юр айĕнчен тухрĕç. Сивĕ çанталăк каллех пулсан тата ирхи сивĕсенче çав уйсенчи калчасем пĕтме пултараççĕ. Кунсăр пуçне тата уйрăм колхозсенче ыраш калчисен пĕр пайĕ иртнĕ кĕркунне ÿссе çирĕпленсе çитеймесĕр юр айне кĕчĕ. Çавăн пек калчасем халĕ юр айĕнчен татах вăйсăрланса тухаççĕ. Çакăнтан куранать ĕнтĕ, юр айĕнчен ир тухнă кĕрхи тырă калчисене сивĕрен упраса хăварассишĕн халь çине тăрса кĕрешмелле. Ку тĕлĕшпе тума кирлĕ ĕçсене пурне те халех тăвас пулать.

Мĕн тумалла-ха ку тĕлĕшпе? Кĕрхи тырăсен калчисене мульчировани туса сивĕрен хÿтĕлес пулать. Калчасене улăмпа, çĕрнĕ вак тислĕкпе, торфпа, хура тăпрапа тата вăрманти çулçăллă тăпрапа витмелле. Çаксене юр айĕнчен ир тухнă калчасем çине хурса çĕр пичĕ çинче çĕн сий тăвас пулать. Çакă вăл тăпра нÿррине тата ăшшине упрать, çĕр пичĕ çинче сивĕпе ăшша пĕр пекрех тытса тăрать, çавăнпа вара калчасем шăнса пĕтессинчен хăтăлаççĕ. Çĕр пичĕ çинче çакăн пек çĕнĕ сий тунине мульчировани теççĕ.

Мульчировани тумалли материалсенчен пирĕн улăм нумай. Кивĕ, иртнĕ çулсенчен юлнă вак улăм. Вăл хуçалăхра халь ĕнтĕ кирлĕ мар, унпа калчасене витес пулать. Ăна калчасем çине 3—4 сантиметр хулăмĕш хумалла. Мульчировании вак тислĕкпе туни питĕ те усăллă. Тислĕке калчасем çине 2—3 сантиметр хулăмĕш хурса тухмалла. Ку вара калчасене сивĕрен хÿтĕлесе çĕр нÿррине тытса хăварать çеç те мар, тăпрана апатлантарни те пулать.

Уйсенче юр нумайччен выртнă вырăнăн купаланса тăнине хирĕç те кĕрешмелле. Юр айĕнче нумай вăхăт выртса кая юлса тухсан калча вăйсăрланать, шыв ытлашши нумай пулни тырра та курăксене те çĕртсе яма пултарать. Çакăнтан асăрхана айлăм вырăнсенче тытăнса тăракан юр çине çÿхен кĕл, тăпра тĕпренчĕклĕ торф сапмалла, юр шывне ирттерсе ямалла.

Кĕрхи тырăсене апат парасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Кĕрхи тырăсене çуркунне ир-ирех апатлани калчасене хăвăрт çĕклет, сивĕпе кĕрешме вăй парать. Калчасене вăхăтра апатлани питĕ те пысăк вырăн йышăнать. Апата ирхи çуркунне, юр ирĕлсе пĕтнĕ хыççăнах, ăшăнма пуçланă тăпра çине памалла. Калчасене минераллă удобренисемпе апатлассине çакăн пек виçепе тумалла: сульфат-аммоние гектар çине 1—1,5 центнер таран, кали тăварне 0,75—1 центнер таран хумалла.

Кĕрхи тырăсене апат парас ĕçре вырăнти удобренисемпе те анлăн усă курни кирлĕ. Кайăк-кĕшĕк тислĕкне (типĕтсе тĕпрентерсе) гектар çине 4—5 центнер таран хума юрать. Тислĕк шывне (пĕр пай тислĕк шывĕ 3 пай шыв хутăштарса) гектар çине 6—8 тонна тăкмалла, хура тăпрана гектар çине 8—10-шер тонна тăкмалла. Çураки вăхăчĕ килсе çитессине кĕтсе тăмасăр, тырăсене апатламалли участоксене халех палăртмалла, удобренисене хатĕрлесе çитермелле.

Кĕрхи тырăсене апатланă хыççăн акнă йĕрсене урлăн сÿрелес пулать. Кĕрхи тырăсем акнă пĕтĕм çĕр лаптăкне сÿрелессине кăçал уйрăмах пысăк хак памалла. Çăмăл тăпраллă вырăнсене çеç мар сÿрелемелле. Калчасене сÿрелес ĕçре кая юласран асăрханмалла. Уя тухма май килнĕ малтанхи вăхăтра, тăпра кушăхма пуçласанах, сÿрелемелле. Апат парассине те, сÿрелессине те участоксене уйрăмăн шута илсе туни лайăх. Кĕрхи тырăсене пăхас пĕтĕм ĕçе бригадăсемпе, звеносемпе туса ирттермелле.

Акнă курăксене те çуркунне апат парас пулать. Акнă курăксене мульчировани тума туранă улăмпа çеç усă курмалла. Акнă курăксене çуркунне сÿреме кирлĕ мар. Юр айĕнчен тухсанах вĕсене кали тата фосфорлă удобренисемпе апатлантармалла, тĕслĕхрен, суперфосфата гектар çине 1,5—2 центнер, 40 процентлă кали тăварне гектар çине 0,75—1 центнер хума юрать. Кали тăварне кĕл улăштарма пултарать. Ăна вара гектар çине 3—4-шер центнер хумалла.

Çÿлте асăннă мероприятисене тĕплĕн пурнăçлани кĕрхи тырăсен, акнă курăксен ÿсĕм пахалăхне хăпартать тата тырпулăн тухăçлăхне ÿстерме май парать.

Профессор **Л. Пельцих**,
Доцентсем: **Т. Кружилин**,
С. Андреев, **К. Наумов**.

Ют çĕршывсенче

ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ ХЭЛЛ ТУХСА КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Пресс-конференцире тухса каланă хайĕн сăмахĕнче государственнăй секретарь Хэлл Черчилль сăмахне пысăка хурса хакланă. Тĕнĕл держависене Хĕвеланăçĕнче те, Хĕвелтухăçĕнче те аркатса тăкса, вĕсене пĕр сăмахсăр парăнтаричченех вăрçма хатĕр пулни çинчен Черчилль каланипе Хэлл хăй кăмăллă пулнине палăртнă. Хэлл каланă тăрăх, çĕнтерÿ тăваччен пĕтĕм вăя хурса кĕрешме кирли çинчен, вăрçă мĕн чухлĕ вăхăта пырасси пирки васкавлă сăмахсем калама кирлĕ марри çинчен Черчилль каланине вăл питĕ интересленсе паллă тунă. Пĕрлешÿллĕ нацисем нумай вăхăта пыракан, пысăк жертвăсемпе инкексем тÿстерекен вăрçă вăрçнине ăнланса илмелле. Хальхи вăхăтра вăрçă хыççăнхи политика ыйтăвĕсем çинчен сÿтсе-явассине хирĕç мар-и эсĕ?, тесе ыйтни çине ответлесе, Хэлл çапла каланă: вăл ыйтусене сÿтсе-явни тĕнĕл держависене хирĕç вăрçма чăрмантармалла мар, пулăшмалла, тенĕ.

ШВЕЦИ ХАÇАЧĔСЕМ ГЕРМАНИН ÇУХАТĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер Германи войскисен çухатăвĕсем тесе кăтартнă кулăшла пĕчĕк цифрăсем çинчен Швеци хаçачĕсем çапла çыраççĕ: вĕсем шухăшласа кăларнăскерсем, теççĕ. «Социалдемократен» хаçат çапла калать: «Польша, Дани, Норвеги, Бельги, Голланди тата Балкан тăрăх «уçăлса» çÿренĕ чухне Германин çухатăвĕсем пысăк мар пулнă пулсан, ун хыççăн вара лару-тăру улшăнса кайрĕ... Вырăссем хĕлле наступлени туни, уйрăмах та Сталинград патĕнче нимĕçсен 6-мĕш армине çавăрса илсе пĕтерсе тăкни Германи çарĕн юнне нумай юхтарчĕ».

«Гетеборгс Хандельстиднинг» хаçат çапла çырать: Германи çăннипе çур миллион çын çеç çухатнă пулсан, халь пĕтĕм çĕршывра фронта яма салтаксем шыраса çÿреме, çавăн пекех тата ютçĕршыв рабочийĕсене пухма кирлĕ пулман пулĕччĕ», тет.

НОРВЕГИРИ НИМĔÇ ЧАÇĔСЕНЧЕН САЛТАКСЕМ ТАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Швеципе Норвеги прессбюровĕ çапла пĕлтерет: Норвегире тăракан нимĕçсен пĕр чаçĕнчен 630 нимĕç салтакĕ тарнă. Вăл чаçран салтаксем тарасси вĕсене СССР-ти фронта ярасси çинчен пĕлтерсен пуçланнă. Салтаксенчен нумайĕшĕ фронта каяс килменни çинчен уççăнах каланă пулнă. Çавăн пирки те чаçра арестленисем пулнă. Нумай салтака персе вĕлернĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, бомбардировочнăй авиацин самолечĕсем мартăн 23-мĕшĕнче кăнтăрла Нант çывăхĕнчи Сен Жозефри паровозсем тăвакан завод çине (Франция) вĕçсе пырса тапăннă. Самолетсем çухатусем тумасăрах хăйсен базисене таврăннă.

Мартăн 23-мĕшĕнче Сен-Назер çине вĕçсе пырса тапăннă çĕрте тăватă моторлă 300 бомбардировщик пулнă. (Сен-Назер вăл Германин Атлантика çыранĕнчи подводнăй лодкăсен чи пысăк базисенчен иккĕмĕшĕ пулса тăрать).

Мартăн 23-мĕшĕнче каçхине тăшман самолечĕсем Англин кăнтăрхĕвеланăç çыранне бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Мальта утравĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, унти истребительсемпе бомбардировщиксем кăнтăрла та, çĕрле те Сицили утравĕпе Итали çыранĕсем çине вĕçе-вĕçе пырса тапăнаççĕ. Мартăн 23-мĕшĕнче ирхине Поццалло районĕнчи завода атакăланă. Çав операцисене тунă вăхăтра икĕ поезда пулеметсемпе пенĕ.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС) Союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 23-мĕшĕнче кунĕпех Марет районĕнче хаяр çапăçусем пынă.

8-мĕш арми тăшман тунă контратакăсене ăнăçлăн сире-сире пырса, çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Тыткăна илнисен хисепĕ 2.000-тен иртсе кайнă.

Гаффы районĕнче Эль-Гаттараран хĕвелтухăçнерехре Америка войскисем тăшман кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчен тунă атакăсене сирсе пăрахнă, хăйсен позицийĕсене тытса тăраççĕ.

Макнассирен çурçĕртерехре союзниксен войскисем, тăшман вăйлăн хирĕç тăрать пулин те, пăртак малалла куçнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ РАБАУЛА ВĂЙЛĂН ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи союзниксен пĕрлешÿллĕ командованин штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем çĕрле Рабаул порчĕ çине (Çĕнĕ Британи утравĕнче) вĕçсе пырса Японин çар объекчĕсене тапăннă. Самолетсем 54 тонна бомба пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула çĕр çинче нумай ялала ишĕлнĕ. Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, Японин çав портра пулнă 250 самолетĕнчен нумайĕшне сиенленĕ е пĕтерсе тăкнă.

ТУРЦИН ÇАР МИССИЙĔ ÇУРÇĔР АФРИКĂНА ПЫНИ

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Африкăна Турцин çар миссийĕ пырса çитнĕ. Мисси членĕсем Эйзенхауэр тата Жиро генералсемпе тĕл пулма тата Тунис фронтне кайса килме шутлаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Заготскотăн Чăваш конторинче ĕçлеме главнăй бухгалтерăн заместителĕ, старши бухгалтерсем, бухгалтер-ревизорсем, çавăн пекех тата районсенче ĕçлеме главнăй бухгалтерсем васкавлăн кирлĕ.
Çак адреспа ыйтмаллла: Шупашкар, Канаш урамĕ, 21. Телефонсем: 3—16, 6—12.
2—2.

Чăваш АССР Наркомпросне бухгалтер-ревизор, статистик, управделами тата машинистка кирлĕ.
3—3

Заводăн ОРС-не çакнашкал ĕçлекенсем кирлĕ: Орсăн подсобнăй хуçалăхĕнче ĕçлеме ялхуçалăх учетне пĕлекен старши бухгалтер, суту-илÿ учетне пĕлекен старши бухгалтер, суту-илÿ, ялхуçалăх тата производство ĕçне пĕлекен бухгалтер-ревизор, столовăй производствин заведующийĕ, 1-мĕш категорири поварсем тата зоотехник.
Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамĕ, 11-мĕш номерлĕ çурт, 3-мĕш хваттер. Ирхине 7—8 сехетсем хушшинче ыйтмалла.

Чувашмедснаба çакăн пек ĕçлекенсем васкавлăн кирлĕ: ответисполнитель, плановик-экономист, материальнăй чаçăн бухгалтерĕ, склад заведующийĕ.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамĕ, 7.
Чувашмедснаб.

Чувашлесзаг трестĕнче ĕçлеме вăрман хатĕрлес ĕçпе специалист, управделами тата грузовикпа çÿреме шофер кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Канаш урамĕ, 17.
2—1
Чувашлесзаг.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

5. Уявсемпе кÿренÿсем

Ĕмĕт, ĕмĕт çил-çунатлă,
Ĕмĕт хăйĕн ачине
Темле юрă пек хăватлăн
Малаллах утма чĕнет.

Вăл утать çула тухасшăн,
Пикенсех çÿрет шкула.
Саспаллипеле паллашнă,
Çырăва шыв пек вулать.

Çурăмри çĕр саплăк витĕр
Çил вĕрсен те, пурпĕрех,
Хăйĕн ĕмĕтне вăл çитĕ,
Мĕскĕн пулмĕ ĕмĕрех.

Антив халĕ шăнкăравлă
Çăварни çĕр кисретсе,
Кайтăр, кайтăр вĕсен таплăк
Пÿрчĕ умĕнчен иртсе.

Антив катаччи кĕрлетĕр,
Лентăсем вĕлкĕштерсе.
Антив урамра пĕрре те
Ан лăпланчăр юрăсем.

Шар-кĕçĕнтĕр хура учĕ.
Янăраттăр Ямаша.
Ларса пыччăр та йăл кулччăр
Хĕрпе каччă юнашар.

Пурпĕрех Хветут пĕччĕнĕн
Кĕнекепеле ларать.
Хăлхине, вуланăçемĕн,
Аллипе хуплать вара.

Уява хăлхи ан илттĕр,
Уяв мар ун чĕринче.
Çамрăк ĕмĕт шăв-шав витĕр
Туртăнать таçта инçе.

Кавказ тăвĕсем пит çÿллĕ,
Çитме çук пек нихăçан.
Анчах ăмăрткайăк çулĕ
Çав тусем урлах каçать.

Ирĕкре çеç пурнăç лайăх,
Ирĕкре кăна хăват.
Аслă кайăк—ăмăрткайăк
Ирĕке кăна сават.

Хĕллехи кунсем иртеççĕ.
Ав шурилнĕ кантăка.
Хĕвел хăвăртăн сирет те
Ăшшине пÿрте тăкать.

Хветут урăх тÿсеймесĕр
Тухать çутă урама.
Çуркунне—мĕн терĕн эсĕ —
Çутçанталăк уйăранать.

Ак çитет мăнкун эрни те.
Ямашра татах шăв-шав.
Анчах ун хăçан-ши çитĕ
Çутă ĕмĕтри уяв?

Питĕ симĕс çамрăк курăк,
Пăхсан куç та ыратать.
Ачасем ав çерем тăрăх
Кустараççĕ çăмарта.

Шăнкăрч саслă вĕрçĕн купăс
Юрă шăрататать лере.
Çавăнта, Хветутăм, чуп эс,
Пуçна тыт эс çÿлерех.

Анчах вăл утать хăюсăр
Чуччу ярăннă çĕре.
Мăнкун çитрĕ капăр тумсăр,
Парнесемсĕр-мĕнсĕрех.

Çынсене кăна пăхатăн
Тĕлĕнсе те тĕмсĕлсе.
Яшсем тăхăннă çут ată,
Хĕрсем çакнă кĕмĕлсем.

Çамрăка уяв паха мĕн, —
Асамат кĕперĕ пек
Ялкăшать Ямаш урамĕ
Тĕрлĕ тĕслĕ тĕрĕпе.

Кĕрен-хĕрлĕ, сенкер, шурă,
Çут тĕнчен пур тĕсĕсем
Варкăшаç мăнкун чуччувĕ
Чу-кайса, пи-кайнăçем.

Илĕртÿллĕ хĕрпе каччă
Тăнă та чуччу çине
Вĕçнĕ евĕр ярăнаççĕ,
Пăхсан чун та çÿçенет.

Купăс ывăнма пĕлмесĕр
Чĕрере чĕртет-çке вут.
Аякра тăратăн эсĕ,
Тарăн шухăшлă Хветут.

Ярăнма сана чĕнмеççĕ,
Санăн çĕтĕк сăхманна.
Эс сисен, хĕрсем тиркеççĕ,
Эс ялта—кĕтÿç кăна.

Эс çапла пĕччен тăратăн
Кунта акă сан умна
Пĕри пычĕ, тăрăхланăн
Тытса пăхрĕ сăхманна.

— Мĕн йышши сукна ку санăн?—
Ыйтрĕ вăл кула-кула.
Эс ăна аван паллатăн,
Ашшĕ ун куштан кулак.

Эс чĕнмерĕн. Сан чĕрÿ çеç
Вĕриленчĕ çилĕпе.
Эс кĕçех çапмарăн хирĕç
Çав манкаллă селĕпе.

Хĕвĕнтех пек леш хай чул та
Сан туйăнчĕ кунта.
Анчах эсĕ çирĕп пултăн,
Парăнмарăн саманта.

Хăвна ху эс лăплантартăн:
Мăшкăл пымĕ нумая,
Пулĕ пирĕн урамра та
Ырă савнăçлă уяв.

Вара эс хÿллен уттартăн, —
Тайлăк пÿрт сана кĕтет.
Мăнкун иртрĕ. Эс хурлантăн.
Часах çимĕк те çитет.

Çепĕç çимĕк ял-йышсемшĕн
Ĕмĕрхи йăлипеле
Хуйхине те, савăнăçне те
Пĕтĕмпех кÿрет пĕрле.

Авалхи çĕре чыслаççĕ
Чăвашсем çак çимĕк кун.
Хĕвелччен мунча хутаççĕ,
Тăхăнаççĕ шурă тум.

Ваттисем-ватта асăнаççĕ,
Чĕреспе йăтса сăра,
Хăйсем майĕпен уттараççĕ
Чечек сарнă масара.

Çамрăксем вара саваççĕ
Шухă, çуйкăн хăвата.
Симĕке вĕсем каяççĕ
Вăрман урлă—Шăмата.

Пултăр çимĕк—пултăр чĕрĕ,
Ахальтен вăл мĕн уяв!
Сар-хĕре шырать яш-кĕрĕм,
Чунтанах кĕтет туя.

Кăкăрти хаваслă юрă
Ешĕл ирĕке тухса,
Омашне вăрманĕ урлă
Шыв пекех каять юхса.

Тули-тули-тули, тусăм,
Тусăм, тăрччĕ ту çинче.
Сан тĕле пулсассăн куçăм
Туй пулассăн туйăнчĕ.

Шăрататать талянкă-купăс
Хăйĕн шухă юррине.
Çимĕке, Хветутăм, чуп эс
Курса юл çу ыррине.

Анчах акă çимĕк кун та
Сатсăр пахчана кĕрсе,
Уява эс пăхса юлтăн
Карта хушăк витĕр çеç.

Хăвăн уявна кĕтетĕн,
Ĕмĕт ялкăшать ялан.
Ансăртран витре илетĕн
Сивĕ шыв ăсма каян.

Çимĕкре пулман пулсан та,
Ăш хыпса килен çынна
Усă шыв ăсса парсассăн
Пулĕ çимĕк курнăннах.

Çапла эсĕ ыр тăватăн
Çынсене çăл шывĕпе.
Ыр тăваç вĕсем сана та
Хĕвелçаврăнăшĕпе.

Çул çинче çапла тăраттăн,
Акă, тĕлĕкри пекех,
Пырса тухрĕ вашаватлăн
Сан умна пĕр сар-пике.

—Ах, питех те ăшăм хыпрĕ,—
Терĕ вăл кулкаласа.
Курка тытрĕ, чăпăрт сыпрĕ,
Сăнĕ хăйĕн тап-таса.

Именсе куçна эс тартрăн,
Пăхаймарăн хĕр çине.
Хĕр кулайрĕ, йăлтăр-ялтăр
Вылянтарчĕ шăрçине.

— Пăхсам,—терĕ хĕр хăюллăн,
Куçна мĕн тартан вара? —
Эсĕ хĕр куçне тĕл пултăн
Витрери таса шывра.

Хĕр те санăнне тĕл пулчĕ.
Пăхрĕ вăл тинкеререх...
Ялкăшса яланлăх юлчĕç
Çав куçсем сан чĕрере.

(Малалли пулать).

Малалли. Пуçламăшĕ 61, 62, 64 тата 65-мĕш номĕрсенче.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 316

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.